# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

12 (7652) № * Шăмат кун, 2009 çулхи февралĕн (нарăс) 14-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Республикăра

## Çĕнĕ заводсем пулаççĕ

Çак эрнере пирĕн республикăра Испани Королевствин Раççейри Чрезвычайлă тата Полномочиллĕ посолĕ Хуан Антонио Марк Пужоль, «Керамика» компанийĕн генеральнăй директорĕ Жорди Батльо пулчĕç.

Испанецсем пирĕн республикăра акрил ваннисемпе санитари керамики кăларакан заводсем лартаççĕ. Пĕтĕмпе вĕсем 68 миллион евро инвестици хываççĕ. Çапла вара 800 çынна валли ĕç вырăнĕ йĕркелеме май килет.

Çак проект кăçал тата çитес çул вăя кĕмелле.

Йĕлтĕр йĕрĕ – 2009

## Пурте – старта!

Пĕтĕм Раççейри «Йĕлтĕр йĕрĕ – 2009" массăлла ăмăртăва ыран Муркашсем те тухаççĕ. Районтан, маларах палăртнă тăрăх, тĕп хулана пурĕ 25 çын каять. Çак команда вăйлă йĕлтĕрçĕсене пĕрлештерсе тăрать. Вĕсен хушшинче – Ярапайкассинчи тата Калайкассинчи вăтам шкулсенче вĕренекен çамрăк спортсменсем, Муркаш районĕнчи шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем, район администрацийĕнче вăй хуракансем, учительсем.

**Февралĕн 15-мĕшĕнче «Йĕлтĕр йĕрĕ - 2009» ăмăртăвĕсем районта та иртеççĕ. Кун пирки район администрацийĕн пуçлăхĕ февралĕн 12-мĕшĕнче 72 номерлĕ йышăну кăларнă. Ăмăрту irттермелли йĕркепе иртнĕ номерте паллаштартăмăр.**

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче район кунĕ умĕн

## Пĕтĕмлетӳсем малашлăха пăхтараççĕ



*«Герой» ял хуçалăх производство кооперативĕ çĕнĕлĕхсем шырассипе тата вĕсене пурнăçа кĕртессипе палăрса тăрать. Çакăнта аслă ăрури ĕçченсемпе çамрăксем килĕштерсе ĕçлени малти вырăнта. Хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртес ĕçре çамрăксене ытларах шанать. Акă иртнĕ çул Чăваш ял хуçалăх академине вĕренсе пĕтернĕ Лариса Иванова (сăн ӳкерчĕкре варринче) – паян хуçалăхри çĕр ыйтăвĕсемпе ĕçлекен специалист. Петров колледжĕ хыççăн ĕçе кӳлĕннĕ Оксана Михайлова (сăн ӳкерчĕкре сылтăмра) – кадрсемпе ĕçлекен инспектор. Паян вăл РФ Президенчĕн патшалăх службин Атăлпа Вятка академийĕнче куçăмсăр майпа пĕлĕве ӳстерет.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕсемпе

## Саккунра çĕнĕлĕхсем пур

***Ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕ хальхи вăхăтра çĕнĕлĕх мар. Çавна май Раççей Правительстви финанс кризисĕн тапхăрĕнче ку ыйту çине тимлĕх уйăрса «Раççей Федерацийĕнче çынсене ĕçпе тивĕçтересси çинчен» Саккуна улшăнусем кĕртрĕ. 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пурнăça кĕнĕ улшăнусем пирки районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Тамара Афанасьевна АНТОНОВА каласа парать.***

– 2008 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче йышăннă Федераллă саккун хăйсен ирĕкĕпе ĕçрен тухнисене пособи тӳлемелли çĕнĕ виçесене палăртнă.

**– Пособисен виçи ĕçрен тухнин сăлтавĕнчен килет-и-ха?**

– 2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пособи панă чухне ĕçрен мĕн сăлтавпа тухнине шута илмеççĕ.

Саккунпа килĕшӳллĕн çынна календарлă 26 эрне ĕçленĕ пулсан тата организацирен ĕçсĕрлĕх пуçлансан 12 уйăх хушшинче ĕçрен кăларнă пулсан, пособие унăн юлашки ĕç вырăнĕн 3 уйăхри вăтам виçине кура палăртаççĕ:

– малтанхи 3 уйăхра – 75 процент;

– хыççăнхи 4 уйăхра – 60 процент;

– кайран вара уйăхри вăтам ĕç укçин 45 процентĕ чухлĕ.

2009 çул валли Раççей Федерацийĕн Правительстви пособисен чи пысăк виçине палăртнă. Вăл 4900 тенкĕпе танлашать. Чи пĕчĕкки – 850 тенкĕ.

**– Сăмахран, çын нумай хушă ĕçлемен пулсан е тата пуçласа ĕç шыракансем валли пособисене мĕн чухлĕ пăхса хунă-ши?**

– Палăртнă йĕркепе ĕçсĕррисем тесе йышăннисене те, вăл шутра унччен ĕçлеменнисене тата ĕç шыраканнисене те, çулталăк ытла ĕçлемесĕр пурăннă хыççăн ĕçе вырнаçас текенсене те пособи виçине чи пĕчĕк виçепе çирĕплетсе параççĕ.

**– Законодательствăра ĕç паракансене пырса тивекен çĕнĕлĕхсем çук-и?**

– Çук мар. Улшăнусемпе килĕшӳллĕн тулли ĕç кунĕпе е сменăпа, тулли ĕç эрнипе усă курман чухне, производствăна 3 ĕç кунĕ чухлĕ чарнă чухне ĕç паракансем ун пирки ĕçпе тивĕçтерекен центра çырупа çырса пĕлтерме тивĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Ыран интернационалист-салтаксен астăвăм кунĕ

## Асран тухмасть Саланг...



Саланг каçăмĕ (перевалĕ) тинĕс шайĕнчен 3500 метр çӳллĕшĕнче вырнаçнă. Туннель тăршшĕ 2700 метр. Вăл Афганистанăн кăнтăр тата çурçĕр пайĕсене уйăрса тăракан стратегиллĕ вырăн. Ăна 1962 çулта совет специалисчĕсен пулăшăвĕпе туса хута янă. Пирĕн çарсем Афганистанра пулнă çулсенче çак перевалта салтаксем йышлă вилнĕ икĕ тĕслĕх пулнă. Пĕрремĕшĕнче 1980 çулхи нарăсăн 23-мĕшĕнче çул çинчи аварие пула туннельри автоколонна чарăнса ларнă та 16 салтак машина тĕтĕмĕпе чыхăнса вилнĕ. 1982 çулхи чӳк уйăхĕн 3-мĕшĕнчи трагеди татах та йывăртарах пулнă. Туннельре сирпĕнсе кайнă бензовоза пула сывлăш çитменнипе 64 совет салтакĕ тата Афганистанăн 112 çар çынни вăхăтсăр пурнăçран уйрăлнă. Эпир вара çак вырăна службăна 1982 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче килсе çитрĕмĕр. Ку вăхăта туннельпе пĕр кун пĕр енчен, тепĕр кун тепĕр енчен çеç колоннăсем яратчĕç.

Пирĕн çарсене Афганистанран кăларсан, çурçĕртисемпе кăнтăртисем хушшинче пуçланнă граждан вăрçинче Ахмад Шах Масуд приказĕпе талибсене çурçĕрти районсене кĕртес мар тесе туннеле сирпĕтсе янă. Вăл 5 çултан çеç ĕçлеме пуçланă.

**Константин ПЕТРОВ,**
**Афганистанри вăрçă ветеранĕ.**

**РЕДАКЦИРЕН:** Сăн ӳкерчĕкре эсир Саланг перевалĕн кăнтăр енче тăнă совет салтакĕсене (пурте чăвашсем) куратăр. Сулахайри – районти шалти ĕçсен пайĕнче 20 çул ĕçлекен тата юлашки çулсенче следстви уйрăмне ертсе пыракан К. Петров.

Официально

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**2 февраля 2009 года №55/2**
**О проведении встречи зарегистрированных кандидатов в депутаты Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по одномандатному избирательному округу № 4, их доверенных лиц с избирателями**

В соответствии со статьей 53 Федерального Закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и со статьей 33 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила**:

1. Провести встречу зарегистрированных кандидатов в депутаты Собрания депутатов Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по одномандатному избирательному округу № 4, их доверенных лиц с избирателями в 14.00 часов 19 февраля 2009 года в Тренькинском СДК.

2. Настоящее решение опубликовать в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Председатель территориальной избирательной комиссии А.В. АНДРЕЕВ.**
**Секретарь территориальной избирательной комиссии В.К. СОРОКИНА.**

Вулакансене пĕлме

## Укçа ĕçлесе илме пулать

Тĕнчери финанспа экономика кризисĕ алăкран хытăрах та хытăрах шаккать. Ĕçсĕр тăрса юлакансем нумайлансах пыраççĕ. «Текстильоптторг» чикĕллĕ яваплăхлă общество вара çакна шута хурса çынсене укçа ĕçлесе илме май туса парать. Çăм çипрен чăлха çыхма ӳркенменнисем çак обществăпа килĕшӳ туса килте ĕçлесе укçа тума пултараççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: (83540)24837, (8352)626520, 626545. Общество Кӳкеçри Шуршăл урамĕнчи 2-мĕш çуртра вырнаçнă.

Милици хроникинчен

## Сыхă пулăр, унсăрăн выльăхсăр хăварĕç

Вулакансене маларах та районта выльăх вăрланă тĕслĕхсем пулни пирки пĕлтернĕччĕ-ха. Çак эрнере вара пирĕн районта тата тепĕр вăрăлла ĕç пулса иртнĕ.

Сыпай тăрăхĕнчи пĕр хуçалăхран çĕрлехи вăхăтра ик ураллă «кашкăрсем» сурăх çавăтса тухса кайнă. Юрать йытти вĕрнипе хуçи кая юлмасăр кил хушшине тухса пăхнă. Вите алăкне вара хăй питĕрнĕ пек мар, урăхларах хупса хăварнине кил хуçи тӳрех асăрханă. Кĕрсе пăхать – сурăх çук.

Арçын çийĕнчех 02 номерпе шăнкăравласа милици сотрудникĕсене вăрăсене тытас ĕçре пысăк пулăшу парать. Районти шалти ĕçсен пайĕн «Шырав» ушкăнĕ пĕр тăхтамасăр çула тухса çак «кашкăрсен кĕтĕвне» Автанкасси – Козьмодемьянск автоçул çинче, Анатри Панкли ялĕнчен инçе мар вырăнта, тытса чарать. Вăрăсен машинине тĕрĕслесен вара багажникра сурăх анчах мар, хур та тупăнать. Ăна кукăр алăсем тепĕр çыннăн хуçалăхĕнчен вăрлани паллă пулать. Вăрăсене ответ тыттарма Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 158 статйипе уголовнăй ĕç пуçарнă та ĕнтĕ.

Кун пек тĕслĕхсем ан пулччăр тесен пирĕн пурин те тимлĕрех пулмалла. Инкек сиксе тухсан е вăрăлла ĕçе асăрхасан вара милици сотрудникĕсем кунĕн-çĕрĕн ĕçре пулнине манмалла мар – тӳрех шăнкăравламалла. Палламан çынна кил хушшине кĕртмелле марри çинчен те ан манăр. Яла какай е выльăха чĕрĕлле пуçтарма килекенсен машинисен номерĕсене пăхса астуса юлни те тепĕр чух ытлашши пулмĕ. Сыхă пулăр.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Юбилей

## Саламлатпăр



Юратнă аннене, аппана, ырă кăмăллă асаннене, пирĕн хаклă çыннăмăра – Васкасси ялĕнче пурăнакан **Ольга Ивановна ВАСИЛЬЕВАНА** февралĕн 15-мĕшĕнче 50 çул тултарнă ятпа пур кăмăлтан саламлатпăр. Эсĕ кирек хăçан та ĕçшĕн çунса тăнипе, хăвăнтан çирĕп ыйтнипе палăрса тăратăн. Санăн ырă кăмăлу пире хавхалантарса тăрать. Турри сана нихăçан та ан пăрахтăр. Çирĕп сывлăх, ăнăçу, çемьере килĕшӳ сунатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе савăнса пурăн.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, кĕрӳшĕ, Степăпа Мария мăнукĕсем, йăмăкĕсемпе шăллĕсен çемйисем, тăванĕсем, пускилсем, ĕçри юлташĕсем.**